*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

14 (2527) №
Хакĕ ирĕклĕ

2015
февраль
нарăс 27

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ЭРНЕКУН

## КĔСКЕН

**Раççей ялхуçалăх центрĕн Чăваш Енри уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх – февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши çурхи культурăсене 49,0 пин тонна е 103 процент хатĕрленĕ (2014 çулта 47,3 пин тонна е 99 процент пулнă). Çуртыррисене 48,4 пин тонна тĕрĕсленĕ. Кондициерлă вăрлăх 34,0 пин тоннăпа е 70 процентпа танлашнă (пĕлтĕр ку вăхăтра 58 процент пулнă). Республикăри 6 районта – Улатăр, Комсомольски, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă тата Çĕмĕрле – çурхи культурăсен элита вăрлăхĕ пачах та çук, Йĕпреçпе Вăрмар районĕсенчи ялхуçалăх предприятийĕсенче элита вăрлăх пĕрер процент кăна.**

**Республикăри хуçалăхсем кăçал çурхи культурăпа çĕрулмин элита вăрлăхне акса-лартса хăварма 1150 тонна туяннă, вăл шутран 593 тонна çурхи тулă, 286 тонна урпа, 31 тонна пăрçа йышши культура, 240 тонна çĕрулми.**

**Чăваш Енри тĕп кардиолог Татьяна Мизурова сăмахĕсемпе килĕшÿллĕн чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсенчен чи анлă сарăлни – юн пусăмĕ ÿсни. «Республикăра пурăнакансен нумайăшĕ хăйсен юн пусăмĕ пысăк пулнине те пĕлмест. Пĕлекенсенчен çуррийĕ – сипленмест, эмел ĕçекенсенчен чылайăшĕ вара ăна пĕли-пĕлми çăтать темелле. Çапла майпа пациентсенчен 10-15 проценчĕ кăна тĕрĕс сипленет, – палăртнă тухтăр. – Инфаркт е инсульт пуласран сыхланса пирĕн пурин те юн пусăмĕ 120/80 пултăр тесе тăрăшмалла».**

## КАЙĂК-КĔШĔК



### Чăх чĕппи туяннă чух

**Пасартан е урăх çĕртен чăх чĕппи туянсан хăвăртрах киле васкатпăр. Вĕсене куç шăрçи пек пăхма пуçлатпăр. Анчах тепĕр чухне вĕсем пĕр-икĕ кунтанах вилме тытăнаççĕ. Чĕппине те, укçине те шел.**

Чăх-чĕп туяннă чух чи малтанах вĕсен чĕрĕлĕхне тĕрĕслемелле. Калăпăр, вĕсем ларакан курупкăна пÿрнепе шаккасан чĕпсен çакна çийĕнчех туймалла – самантлăха шăпланмалла, унтан каллех шиплетме пуçламалла. Пĕр кунри чĕпсен çăра та типĕ мамăк тĕк пулмалла, кăвапи тухса тăмалла мар. Ура çинче çирĕп тăмалла, хыçалти пайĕ нÿрлĕ ан пултăр.

Ура çинче аран тăракан, курупкăна шаккаса пăхнине нимĕнле те йышăнман, çурма хупă куçлă чĕпе туянмалла мар.

Тепĕр чух чĕпĕн кăвапи шыçăнса тăрать. Сутуçă çакна чĕп тин çеç çăмартаран тухнипе çыхăнтарать, хайхи шыçă часах чакасса пĕлтерет. Ан ĕненĕр – кунашкал чĕпĕ сывă юлсан та начар аталанать, унран ним усси те пулмĕ.

Çитĕнерех кайнă чĕп туяннă чухне те вĕсем хăйсене епле тытнине сăнамалла: йăрă-и, çуначĕ мĕнлерех? Тĕршĕннĕн курăнакан, хускалсах кайман, çунатĕнче пысăк тĕксем курăнса тăрсан – туянмасан аванрах. Ку паллăсем чĕпсем таçта шăннине, кайран чирлеме пултарасса систереççĕ. Юлашки вăхăтра пасарта çаралма пуçланă чĕпсене сутнине курма пулать. Кунта ним хăрушши те çук – кусем бройлерсем. Çапах та ку ыттисен те çапла пулмалла тенине пĕлтермест, бройлерсене кăна пырса тивет ку.

Кăвакалпа хур чĕппи суйланă чух та çÿлерех асăннă мелсемпе усă курмалла.

Пирвайхи кунсенче чĕпсене чĕрĕ шыв пама юрамасть. Чи лайăххи – вĕретсе пÿлĕм температури таран сивĕтни. Тин вĕретнĕ шыва сивĕнме лартиччен унта мулкач курăкĕн (тысячелистник) пĕчĕкçĕ туратне ярсан тата лайăхрах – çакă вĕсене чĕкĕрене ересрен упрĕ.

Малтанхи кунсенче чĕпсене манна кĕрпипе е тĕпретнĕ шурă сухарипе хутăштарнă вĕтетнĕ çăмарта памалла. Каярах вара вир, рис, куккурус кĕрписене те пама юрать. Ăшăх турилккере яланах таса шыв пулмалла.

| ÇАНТАЛĂК | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Шупашкарта | Вăхăт | 27.02 | 28.02 | 1.03 | 2.03 | 3.03 |
| | Температура, $^0$C | 2-4 сехетре | –3 | –4 | –5 | –4 | –10 |
| | | 14-16 сехетре | 0 | –2 | –2 | –2 | _1 |
| | Юр çăвать | | – | – | * | – | – |
| | Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 761 | 758 | 758 | 755 | 755 |

## КИЛ

ЯЛ-ЙЫШ ХŸТЛĔХ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

**ПАЯН кун тăршшĕ 10 сехет те 32 минут. Уйăх тулса пырать.**

**Кирилл кунĕнче лайăх çанталăк пулни – сивĕсем таврăнасса.**

**ЫРАН – сурăх усракансене хÿтĕлекен Онисим кунĕ. Çак кун хресчен сурăх лайăх пăранлатăр тесе кĕлĕ тунă. Хĕлпе çур тавлашаççĕ.**

**ВИÇМИНЕ – Ярилле кунĕ. Хĕвел пайăркисем хĕле пăркăчлама пуçлаççĕ. Çие юлнă хĕрарăмсем хĕвел çинче ытларах пулма тăрăшнă, ача çуратма вăй пухнă.**

**Çур пĕрремĕш кунранах ашкăнма тытăнсан – кайран улталать.**

## КИЛ-ТĔРĔШРЕ

### Шăши ан кĕтĕр

Маларах тĕпсакайне шăшипе йĕкехÿре таврашĕ иленнипе нушаланаттăм. Халĕ вара иккĕмĕш çул вĕсемсĕрех хĕл каçатăп. Мĕнле тетĕр-и? Тĕпсакайне кĕл сапса тухрăм. 5 тăваткал метр пуçне – пĕрер витре. Ура тĕпне çыпăçнă кĕл шăшине канăçсăрлантарать иккен. Вĕсем ăна çулласа тасатма пуçлаççĕ те хайхи çăвара лексе чĕпĕтме тытăнать. Çапла ансат майпа чĕнмен хăнасенчен хăтăлтăм.

### Шăнкăрчсем киличчен

Хурт-кăпшанка пĕтерме темле имçампа та усă куратпăр. Çав вăхăтрах хамăрăн çунатлă туссем пирки манатпăр. Калăпăр, шăнкăрчсем тĕрлĕ кăпшанкăпа апатланнисĕр пуçне колорадă нăррине те тиркемеççĕ. Вĕсем валли халех вĕлле туса çакасчĕ. Çуркунне çĕнĕ йăвана йышăнсан вĕсем ырра хирĕç ырăпа тавăрĕç.

## СĔНŸ-КАНАШ

● Вăрлăх лайăх шăтса тухтăр тесен ăна çур сехет майлă марганцовка шывĕнче тытмалла. Унтан юхса тăракан шыв айĕнче çуса илмелле те пĕр талăк кĕл шывĕнче (1 л вĕри шыва 2 кашăк кĕл ярса икĕ талăк тăрăлтарса лартмалла) тытмалла. Ун пек аппаланас килмесен Байкал ЭМ-1 е Фитоспорин шĕвекĕпе усă курмалла.

●Вăрлăх шăтаслăхне çапла тĕрĕслеççĕ: 1 л шыва 30-50 г тăвар ярса пăтратмалла. Вĕтĕ те пушă вăрлăх çиеле ишсе тухĕ, шултри тĕпне ларĕ.

## ЫЙТУ – ХУРАВ

### Кăçал помидор çиесчĕ

**? Хаклă редакци! Иртнĕ çул теплицăри помидор пĕтĕмпех чирлерĕ. Кăçал та çаплах ан пултăр тесен теплицăна мĕнпе сиенсĕрлетмелле?**

**Ольга ПЕТРОВА. Çĕнĕ Шупашкар.**

Кĕркуннех, çимĕçе пухса кĕртнĕ хыççăн, теплицăна пĕтĕмпех çуса тирпейлемелле пулнă. Тăпран çиелти сийне 5-8 см таран илсе ăна çĕннипе улăштармаллаччĕ. Халĕ тин мĕн тума пулать-ха? Çуркунне теплицăри çÿпçап юлашкине пĕтĕмпех тасатмалла, çĕре шăвармалла, форточкăпа мĕнпур шăтăк-çурăка хупламалла. Унтан теплица варрине тимĕр листа çине **кÿкĕрт чăмакки (серная шашка)** хурса ăна чĕртсе ямалла. Вăл сехете яхăн йăсăрланса выртĕ, çак хушăра наркăмăшлă тĕтĕм теплицăна, унти çĕре дезинфекцилесе тасатĕ. Çапла 4-5 кун тумалла. Лайăх мар шăршăран хăтăлма теплицăна 2 эрне таран уçăлтараççĕ.

**Пăхăр купоросĕпе** те сиенсĕрлетме пулать. Пĕр витре шывра 1 кашăк пăхăр купоросĕ ирĕлтермелле. Пахчаçимĕçе пухса кĕртнĕ хыççăн унпа теплицăри çĕре шăвармалла.

**Марганцовка шывĕ** те пулăшать: шыва тĕттĕм кĕрен тĕслĕ туса çĕр çийĕн сапаççĕ.

Çÿлерех асăннă ĕçсене теплицăна калча лартиччен е вăрлăх акиччен 30 кун маларах, çĕр 10 градус таран ăшăнса çитсен пурнăçлаççĕ.

Помидора теплицăра çитĕнтерес тесен чи малтанах чир-чĕре парăнман томат сорчĕсене (Боец, Гранд, Дубрава, Москвич, Снежана, Ранеточка, Маленький принц тата ыттисем те) суйласа илме тăрăшмалла. Калчана теплицăна май уйăхĕн пĕрремĕш çурринче, 20 см тарăнăшĕнчи çĕр 13 градус ытла ăшăнсан, калча тăршшĕ 30-35 см çитсен куçарса лартмалла.

Помидор калчине марганцовка шывĕпе (10 л шыва 1 г) шăварнă шăтăка лартаççĕ. Лартнă хыççăн икĕ эрне таран шăвармалла мар, капла калча лайăхрах тымарланать.

Ытлашши хунав туратсене 5 см тăршшĕне çитиччен иртмелле.

Тĕмсене 5-6 кунран шăварса тăрсан çитет. Ытлашши «тăрăшсан» çимĕç тутлă ăшлă пулмасть, сахăр шайĕ те чакать, йÿçек те шывак пулать, кайран вара çуркаланма пуçлать.

Ÿсен-тăрана фитофтор ан çулăхтăр тесен çу каçипе виçĕ хут çакнашкал препаратсемпе сапмалла. Пĕрремĕш хут, «Заслон» текеннипе – 300 г шыва ăна хăйĕн виткĕçĕпе пĕрре хушмалла; иккĕмĕшĕнче «Барьерпа» – витре шыва 5 кашăк; виççĕмĕш хут – ыхра шывĕпе (10 л шыва 50 г ыхра хырса ямалла, кăшт марганцовка хушмалла). Пĕрремĕш хут калчана теплицăна куçарса лартсан 3 эрнерен пĕрĕхтермелле, иккĕмĕш хут – 20 кун иртсен, виççĕмĕш хут – тĕмсен пĕрре виççĕмĕш пайĕ чечеке ларсан.

Теплицăна çĕрулми анинчен май пур таран аяккарах вырнаçтарма тăрăшмалла.

### Шĕвĕрĕлчен пулсан

**? Сысна çурисен шĕвĕрĕлчен пур пек туйăнать. Начар çиеççĕ, пĕрмаях айсарăмне пăтраштараççĕ. Самăрăлни те, ÿт хушни те курăнмасть. Мĕн тумалла-ши?**

**Николай ЯКИМОВ.**

Сысна ÿт хушманни, аппетичĕ çукки тĕрлĕ сăлтавпа çыхăнма пултарнă. Каяшпа пĕрле паразит тухни чир тарăна кайнине пĕлтерет.

Эрĕм (полынь), пилеш курăкĕ (пижма), кавăн тĕшши, гранат çимĕçĕн хуппи, йÿç кăшман, сухан, ыхра, сар çип ути (зверобой) – пурте шĕвĕрĕлчене хирĕç кĕрешме пулăшаççĕ.

Шĕвĕрĕлченрен сысна çурисене хĕрлĕ тата шурă клевер, люпин силосĕ, кăшман çулçи силосĕ, хыр лăсси çитерни усăллă. Вĕсене черетлесе валашкана хурса парсан çурасен сывлăхĕ палăрмаллах лайăхланма кирлĕ. Сысна витине кăнтăр енне пăхмалла тусан аванрах, уçăлтармалли вырăн та хĕвеллĕ енне пулсан аванрах. Шĕвĕрĕлченпе ытти паразит çăмарти хĕвел пайăркипе хăвăрт вилет.

Витере каяш нумай пухăнса каймалла мар. Хушăран дезинфекци тумалла: апат валашкине, урайне, стенасене вĕрекен шывпа сапмалла. Анчах малтан витене лайăх тасатмалла.

ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

## Ĕçленине çирĕплетмелле

**Пенсие тухнă хыççăн 73 çула çитиччен колхозра договорпа тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра йĕтем çинче хуралçăра ĕçлерĕм. Çав вăхăта темшĕн стажа кĕртмеççĕ. «Ĕç ветеранĕ» ята илме мана икĕ уйăх кăна стаж çитмест. Хаçат урлă ăнлантарса парăр-ха, тĕрĕсех тăваççĕ-ши?**

**Василий КАДУШКИН.**
**Патăрьел районĕ, Турхан.**

Хисеплĕ Василий Семенович, сирĕн çырăвăра РФ Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмне ярса патăмăр. Çапла хурав илтĕмĕр:

– Пенси саккунĕпе килĕшуллĕн стажа обязательнăй пенси страховани тытăмĕнче регистраци тăвиччен документсемпе (ĕç кĕнекипе, ĕç килĕшĕвĕпе е справкăсемпе) çирĕплетеççĕ, регистраци тунă хыççăн – ĕçпе тивĕçтерекен Пенси фондне тăратнă сведенисене тĕпе хураççĕ.

Çапла вара, ĕçпе тивĕçтерекен Пенси фондне сирĕн çинчен сведенисем тăратнă тапхăра кăна стажа кĕртме май пур. Мĕнле тапхăрсемшĕн сведенисем тăратни çинчен колхоз бухгалтерийĕнчен е вырăнти пенси уйрăмĕнчен ыйтса пĕлме пултаратăр.

ШУТА ИЛМЕ

## Гripран сывалма

*Вирус инфекцийĕнчен хамăр тĕллĕн сиплеме хăтланса йăнăшсем те тăватпăр. Халăхра çирĕпленнĕ ăнлавсене Марина НЕФЕДОВА тухтăрпа пĕрле пăхса тухар-ха.*

**Температура пысăк пулнине чăтса ирттерсен аванрах. Вăл мĕн чухлĕ пысăкрах, вирус организмран çавăн чухлĕ хăвăртрах тухса каять.** Чăннипе вара температура 38,5 градусран пысăкрах пулсан ăна чакармалла, мĕншĕн тесен тахикарди (чĕре хăвăрт тапни) хăрушлăхĕ пулма, сывлăш пÿлĕнме, ăс-тăн арпашăнма, шăнăр туртса лартма пултарать.

Унсăр пуçне температура мĕн чухлĕ пысăкрах, организмра юн çăраласси çавăн чухлĕ хăвăртрах пулса пырать. Тромб пулас хăрушлăх ÿсет. Çавăнпа «мĕнле те пулин чăтса ирттерĕп» тенипе ĕç тухмĕ. Температура 38,5 градусран ытларах хăпарсан вĕрилентернине чакармалли эмел ĕçмелле.

**Организм инфекципе лайăххах кĕрештĕр, вăй-хал усăсăр ан пĕттĕр тесен чирленĕ вăхăтра выçă тытни усăллă.**

Тĕрĕссипе вара чирленĕ вăхăтра çиме юрать, çимелле те. Апат çименни лару-тăрăва йывăрлатать кăна, вăя пĕтерет.

Лайăх ирĕлекен çăмăл апат çиме тăрăшмалла. Çуллă, пăрăçлă, тăварлă апатран пăрăнмалла, пахчаçимĕç салачĕ, пулă яшки, улма-çырла çимелле.

**ОРВИ хăрушах мар, ăна ура çинчех ирттерсе яма пулать.** Чăннипе чир вăхăтĕнче мĕнпур орган ĕçĕ йăвăшланать, наркăмăшланать. Ура çинче тÿссе ирттернĕ инфекци чĕрене, пÿрене сиенлеме пултарать.

Çавăнпа чирĕн чи йывăр тапхăрне вырăн çинче ирттермелле, тухтăр сĕнĕвĕсене пурнăçламалла.

**Иммунитета çирĕплетекен препаратсем темле тĕлĕнтермĕш тума та пултараççĕ, чирленĕ вăхăтра вĕсем питĕ кирлĕ.**

Чăн та, çак препаратсен ушкăнне (кунта женьшень, элеутерококк, родиола настойĕсем кĕреççĕ) вирус чирĕсем чухне ĕçеççĕ. Анчах вĕсене тухтăр çырса памасăр усă курма юрамасть, мĕншĕн тесен вĕсем иммунитета пулăшнисĕр пуçне вăрах вăхăт усă курсан унăн ĕçне пачах путлантарма та пултараççĕ. Çавăн пекех хăш-пĕр чир (аутоиммун тиреоидичĕ, ревматоид артричĕ) юхăмне япăхлатма пултараççĕ. Асăрханулăрах пулмалла.

КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ?



Тинкĕле курăкĕ

**Пÿрене тасатма.** Вĕреме кĕнĕ 1 стакан шыва 1 кашăк чухлĕ типĕтнĕ тинкĕле курăкĕ (толокнянка) ярса 20 минут пăс çийĕн тытмалла, унтан çур сехет пек хупăлчапа хупласа – пÿлĕм температуринче. Сăрăхтарнă хыççăн ăна апат çиичченн 15-20 минут маларах икшер кашăк çимелле.

Çакăн хыççăн пĕрер стакан сĕлĕ кĕселĕ ĕçмелле. Кĕселе çак рецептпа хатĕрлемелле: тасатман сĕлле темиçе хут сивĕ шывпа çумалла, унтан ăна икĕ пÿрне хулăнăш хуплamaлăх шыв ярса йăваш çулăм çинче вĕреме кĕртмелле. Вĕреме кĕрсен çулăма пĕчĕклетмелле те хатĕр пуличчен пĕçермелле. Кайран ăна вĕтĕ ала витĕр кăлармалла. Ун çине тăвар та, сахăр та ямалла мар, ăшăлла çимелле.

Çапла майпа çуркунне тата кĕркунне икĕ эрне таран сипленмелле.

**Ангинăран.** 1) Çур стакан чухлĕ сухан сĕткенĕ кăлармалла, 2 кашăк пыл хушмалла, лайăх пăтратмалла (пылĕ ирĕлсе пĕтиччен). Унпа ыратакан карланкăна кунсерен 2-3 хут лайăх сĕрмелле. Çапла сывалса çитиччен тумалла. Çакна тунипе пĕрлех ура тĕпне хайхи хутăшпа йĕпетнĕ горчичник çыпăçтарса çăм нуски тăхăнмалла. Çапла майпа ангина часах парăнĕ.

2) Вĕреме кĕнĕ 1 л шыва 1 стакан палан çырли ярса йăваш çулăм çинче 15 минут вĕретмелле. Сивĕнсен 1 кашăк пыл хушмалла. Кун тăршшĕнче сыпкăмăн-сыпкăмăн ĕçсе ямалла. Çапла майпа пĕр-икĕ кунрах пыр ыратнинчен хăтăлма пулать. Сипленме шăнтса хунă паланпа та усă курма юрать.

**Пуç ыратсан.** Çамкапа тăнлав çине çавраşкан каснă чĕрĕ çĕрулми касăксем хурса çирĕплетмелле, вĕсене типсе пынăçемĕн улăштармалла.

**Гипотониресн** (юн пусăмĕ чаксан). 1) 2 кашăк чухлĕ авăртнă кофе, 10 кашăк пыл тата 1 лимон сĕткенĕ хутăштармалла. Апат çинĕ хыççăн 2 сехетрен ăна пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле.

2) 500 г вĕтетнĕ астăрхан мăйăрĕпе 500 г пыл хутăштарса кунне 3 хут пĕрер кашăк çимелле.

**Циститран.** Тин вĕретнĕ 1 стакан шыва 2-3 кашăк укроп вăрри ямалла. Хупласа сивĕниччен тытмалла, сăрăхтармалла. Çичĕ кунччен укроп шывне ирпе-каçпа ĕçмелле.

АЛ АЙĔНЧИ

## Укçа курăкĕпе

Пÿре сывмарлансан асанне меслечĕпе сывалтăм. Вăл мана сиплеме укçа курăкне (толстянка) парнелерĕ. Укçа курăкĕн темиçе çулçине лайăх вĕтетмелле. Тин вĕретнĕ 1 стакан шыва ăна чей кашăкĕпе тÿпелесе ярса йăваш çулăм çинче 15 минут вĕретмелле. Унтан ăна сехете яхăн тăрăлтарса лартмалла, сăрăхтармалла. Çак шĕвеке икĕ эрне таран кунне 2-3 хут, апат умĕн 15-20 минут маларах, пĕрер кашăк ĕçмелле.

Укçа курăкĕ маншăн ытти енĕпе те усăллă пулчĕ. Çулçă сĕткенĕпе сăпса е пыл хурчĕ сăхса илнĕ вырăна сĕрме аван. Суран таврашĕ, пĕçертсе илнĕ вырăн унпа сĕрсен хăвăртах сывалĕ. Çулçа тăршшĕн касса ыратакан вырăна хураççĕ. Ангина вăхăтĕнче çулçа хăйне хальлĕн чăмлани усăллă. Ман шутпа çак сиплĕ чечек кашни килте пулмалла.



## Мăкăльрен хăпрăм

**Хырăмлăхри мăкăле (полип) пĕтерме шăнăр курăкĕ пулăшрĕ.**

Шăнăр курăкĕ



Шăнăр курăкĕн (подорожник) 15 çулçипе шĕпĕн курăкĕн (чистотел) пĕчĕкçĕ çулçине лайăх çумалла, типĕтмелле, ирхи апатчен çур сехет маларах çисе ямалла. Икĕ эрне сиплентĕм, унтан икĕ эрне канса çакнах тепĕр хут турăм.

Çакăн хыççăн шĕпĕн курăкĕн пĕчĕкçĕ туратне 1 стакан шыва ярса 5 минут вĕретрĕм, сивĕниччен кĕтрĕм, сăрăхтартăм. Икĕ эрне таран ирпе-каçпа апат умĕн çуршар стакан ĕçрĕм.

Тепĕр тĕрлĕ рецептпа та сиплентĕм. 1 кг чухлĕ услам çăва ирĕлтермелле, нимĕнле кăпăк та ан юлтăр. 800 г чухлĕ таса çăва çавăн чухлех илнĕ пылпа хутăштарса «шыв мунчинче» 8 сехете яхăн тытмалла. Сивĕнсен хутăша çур литрлă банкăсене ямалла. Кунне 3 хут, апатчен çур сехет маларах, пĕрер кашăк усă курмалла. Сиплев тапхăрĕ – хутăш пĕтиччен. Кайран тĕрĕслеве кайса килтĕм. Полипсем çухалнă!

## Шăнса пăсăласран

Çур литр шур эрехе 2 пуç ыхра вĕтетсе ямалла. Ик-виçĕ кунтан ăна ĕçме те юрать. Грипп çулăхас тата шăнса пăсăлас хăрушлăх пур чухне хайхине каççерен 40-50 мл ĕçмелле. Хăвачĕ те, шăрши те питĕ хаяр унăн, анчах ăна ĕçнĕ хыççăн нимĕнле вирус та çулăхаймĕ.

**Светлана ЗАЙЦЕВА пуххинчен.**

СИППЕ КАЙТĂР

## Сĕлĕпе олива çăвĕ

**Иммунитета çирĕплетме çак рецептсемпе черетпе усă курма юрать.**

◆ Ирпе, выçварла, 1 кашăк чухлĕ олива çăвне 1/4 чей кашăкĕ ыхра порошокĕпе пĕрле çимелле.

◆ Кофемолкăпа сĕлĕ авăртмалла. Термоса тин вĕретнĕ 250 мл шыв тата 1 кашăк чухлĕ авăртнă сĕлĕ ямалла. Силлесе лайăх пăтратмалла, ирччен кĕтмелле. Выçварла 1 чей кашăкĕ пыл хушса ĕçмелле.

◆ Авăртнă йĕтĕн вăррине сахăрпа (3:1) хутăштармалла. Кунне 3-4 кашăк çимелле (ачасен – 2 чей кашăкĕ).

## Простатит ан çулăхтăр

Çулсем иртнĕçемĕн простата ан çулăхтăр тесен арçынсен халех профилактика ĕçĕсем туса ирттермелле, тĕрлĕ хускану тумалла.

✓ Калăпăр, чĕркуççине май пур таран çÿлерех çĕклесе пĕр вырăнта чупмалла.

✓ Картлашкапа пĕр-ик картлаç сиктерсе утмалла.

✓ Çурăм çине выртса пĕр урапа 0 пуçласа 10 таран «çырмалла», унтан çакнах тепринпе тумалла.

Арçынсемшĕн çакнашкал салат усăллă: петрушкăна тураса теркăланă кишĕрпе хутăштармалла, тип çу хушмалла. Çак салата кунне пĕр хут туса çимелле.

ХАМĂРА ЮРАТСА

● Ытлашши çисе лартар мар. Çулсем иртнĕçемĕн веществосен çаврăнăшĕн ĕçĕ япăхланать: ытлашши кашни килограмм пирĕн çула ÿстерет кăна.

● Начарланасчĕ текенсен сакăр сехетрен кая мар çывăрмалла.

● Ытларах кулма тăрăшмалла, кулни ĕмĕре тăсать.

● Каçарма вĕренмелле. Япăх шухăш-кăмăлпа тата хаярлăхпа ан пурăнăр. Кама кÿреннине ку пурпĕр пырса тивмест, хăвăрăн сывлăхăра вара начар витĕм кÿрет.

● Спортпа туслашни çамрăклăха 5-6 çула тăсать. Кахалланмалла мар!

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРŸСЕМ

*СУТАТĂП / ПРОДАЮ*

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**4. Немецкие пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. **Без выходных. Т. 8-987-576-65-62.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**15. КИРПИЧ.** Т. 89613393363.

**22.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Дёшево. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89370101054.**

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Т. 89061355241.

**24. Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**29. Косилки,** грабли, фрезы, **опрыскиватели,** картофелесажалки, **доильные аппараты.** ДОСТАВКА! Т.: 89379559802, 89373758095.

**30. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31. Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень. Д-ка.** Т. 89033225766.

**33. Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

**35.** Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**43. Брусчатку, плиты** тротуарные, **бордюры, водостоки** по старым ценам. Т. 89674702736 (Мир камней, Чебоксары, пр. Машиностроителей, 1Д).

**58. Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** чернозем. Д-ка. Т. 89276687015.

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

### Виççĕмĕш ачашăн

**? Пирĕн виççĕмĕш ача çуралчĕ. Уншăн алла çĕр пин тенкĕлĕх сертификат пачĕç. Çав укçана илме ăçта каймалла?**

**Сергей ИВАНОВ.**
**Канаш районĕ, Ешкилт.**

2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕ хыççăн çуралнă (усрава илнĕ) виççĕмĕш е ун хыççăнхи ачашăн пирĕн республикăра 100000 тенкĕ параççĕ. Анчах вăл укçана тӳрремĕнех алла памаççĕ. Унпа ача виçĕ çул тултарсан кăна пурăнмалли условисене лайăхлатма е ачасене вĕрентме усă курма юрать. Пурăнмалли условисене лайăхлатнă çĕре çурт туни е туянни, ипотека кредитне тӳлесе татни, пурăнмалли уйрăм çурта юсаса çĕнетни кĕрет.

Укçапа ача виçĕ çул тултариччен усă курма ирĕк паракан пĕртен пĕр сăлтав вăл – çурт тума е туянма тăкакланă тĕп парăма тата кредита тӳлеме усă курасси.

## КУЛАР-И?

Хĕрарăм вунпиллĕкĕмĕш ачине çуратать. Акушерка хайхи хĕрарăм упăшкине калать:

– Сирĕн, ахăртнех, ача пуласран хӳтĕленме тивет...

– Тухтăр, – тет арçын кӳренсе, – пире ачасене Турă парать-çке.

– Çапла. Вăл пире çумăрне те ярса парать, анчах эпир плащ тăхăнатпăр-çке!

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР

### Ӳпкерен – гуляж

**500 г ӳпке, пуçлă сухан, пĕрер кашăк томат пасти, çăнăх тата тип çу.**

Вырьăх ӳпкине лайăх çуса йăваш çулăм çинче 1,5-2 сехет пĕçермелле. Унтан тăваткăлласа турамалла, пăрăçпа тăвар сапса çатмара ăшаламалла. Çăнăхпа сапмалла, вĕтетнĕ сухан хушса тата кăштах ăшаламалла. Унтан ăна кастрюле ямалла, ӳпке пĕçернĕ шыва 2-2,5 стакан чухлĕ, томат, лавр çулçи хушмалла. Хупласа 10-15 минут майлă пăшăхламалла.

### Тутлă «çĕрулми»

**400 г печени («Топленое молоко», «Юбилейное»), 100 г услам çу, 3 кашăк какао-порошок, çур банка сгущенка.**

Печение йĕтĕрлесе тĕпретмелле, какао сапмалла, сгущенка тата ирĕлтернĕ услам çу хушмалла. Пĕр евĕрлĕ хутăш пуличчен лайăх пăтратмалла, çаврашкасем тумалла. Икĕ сехетлĕхе холодильника хумалла. Çавăн пекех вĕтетнĕ măйăр хушма юрать. Хăйне евĕр питĕ тутлă «çĕрулми» пулать.

### Килти паштет

**1 кг чăх пĕверĕ, 3 пуç сухан, 100 г услам çу, 3 кашăк тип çу, 400 мл хăйма, 500 мл сĕт, тăвар, авăртнă хура пăрăç.**

1. Пĕвере сивĕ шывпа çуса çурхахĕнчен тасатмалла. Унтан сĕт çине ярса сехете яхăн лартмалла: вăл сиенлĕ япаласене пĕтĕмпех туртса илĕ.

2. Сухана çурмаункă пек туса касмалла, тип çупа услам çу хушса ăшаламалла.

3. Сĕтрен кăларнă пĕвере сивĕ шывпа çуса илмелле. Ăшаланă суханпа хутăштармалла. Вăтам çулăм çинче 20-30 минут ăшаламалла, тăтăшах пăтратса тămалла.

4. Унтан çулăма чакармалла, хăйма хушмалла: вăл çатмари çимĕçе пĕтĕмпех хупламалла. Хăйма çурри таран пăсланса пĕттĕр. Çакăн хыççăн çеç тăварпа пăрăç калаттармалла. Çулăма чармалла.

5. Суханпа пĕвер хутăшне блендерпа вĕтетмелле, услам çу хушмалла.

6. Паштета тăм чӳлмеке куçарса пĕр кас холодильникра лартмалла.

### Хăвăрт пулакан купăста

**2 кг купăста, 2 кишĕр, 6 шăл ыхра.**

**Маринад: 1 л шыв, 2 кашăк тăвар, 3 кашăк сахăр, 150 г тип çу, 3 лавр çулçи, 3 пĕрчĕ тутлă шăршăллă пăрăç, 150 г апатçимĕç уксусĕ.**

Купăста турамалла, анчах ăна алăпа пусса лапчăтмалла мар. Кишĕре шултра теркăпа хырмалла. Ыхрана пускăч витĕр кăлармалла. Пылакрах тутăллă тăвас тесен ыхра вырăнне теркăланă панулми илмелле. Пурне те пĕрле хутăштармалла.

Маринад: шыва тăвар, сахăр, тип çу, лавр çулçи, тутлă шăршăллă пăрăç хушса вĕреме кĕртмелле. Вĕреме кĕрсен уксус хушмалла. Тăвар шывне вĕриллех купăста çине ямалла, хушăран пăтратса илмелле. 3 сехетрен çиме те юрать.

## ШӲТЛЕСЕ ТЕ ЧĂНЛАСА

**Клавдия ВИШНЕВСКАЯ**

### Юмăç хĕрĕ

– Анне, эсĕ хăвна юмăç тетĕн, пулăш-ха мана.

– Мĕн туса пулăшам-ха сана?

– Манăн çав Сарри Сергейне хамăн măшăр тăвас килет.

– Э-э, ăна-и? Тăхта. Илсе пар-ха çав пĕремĕке.

– Ме, тыт.

– Тьфу!Тьфу! Пылакпа сурчăк пĕрле пулса манăн хĕре пулăшăр.

Ме, хĕрĕм, çитер çакна Çеруша.

– Анне, эсĕ Сергей пуçĕ çаврăнтăр теме манса кайрăн-çке.

– Э-э, чăн та. Кӳр-ха каялла пĕремĕке. Тьфу! Çав Çерушран пĕтĕм хĕр сивĕнтĕр.

– Анне, эсĕ мĕн? Унран вара эпĕ те сивĕнетĕп вĕт.

– Юрататăн пулсан мĕншĕн сивĕнетĕнха, хĕрĕм?

– Эсĕ сивĕтетĕн, анне.

– Эпĕ сивĕтме пултарсан унта юрату çук, эппин. Сана юратман Çеруша та эпĕ çавăрма пултараймастăп.

### Çулламан пăру

Каччă хĕр хыççăн çӳре-çӳре ывăнать те:

– Паянтан эпĕ сана манса кайма тăрăшăп, – тет.

– Мĕншĕн? Эпĕ сана мĕн усал турăм? – ыйтать хĕр.

– Усалпа мар, лайăхпа та чуптутармарăн.

– Эпĕ санăн арăму мар вĕт, эсĕ кăмăл тунипех чуптутарма, – хуравлать хĕр.

– Чуптуман хĕре кам арăм тăвать? – парăнмасть каччă.

– «Çулламан» пăру килĕшмесен çуллани патне кай эппин, – тавăрать пике.

### Асаттепе асанне пек

– Манăн асанне кашни кунах вилеп тет, – тет хĕрача пускил ачине.

– Манăн асатте те кашни хĕл вилет, – юлмасть унран юлташĕ. – Кашни хĕл килмессерен юлашки тет.

– Кашни хĕл вилни, кашни кун вилни марха, ăна чăтма пулĕ, – шухăшлăн хуравлать хĕр пĕрчи.

– Эпир те ватăлсан асаттепе асанне пекех пулăпăр-ши?

– Хĕрача – асламăшĕ пек, арçын ача аслашшĕ пек пулать теççĕ çав, – хаш сывлать кӳршĕ хĕрĕ.



Реклама

### Пулăшу калăпăшĕ ӳсет

Раççей ялхуçалăх банкĕн Чăваш Енри филиалĕн пĕчĕк тата вăтам бизнесăн кредит портфелĕ иртнĕ çул 11 процент ӳснĕ. 2015 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăл 4,9 млрд тенкĕпе танлашнă. Укçана ялхуçалăх техники, оборудовани туянма, уй-хир ĕçĕсене ирттерме, инвестици пурнăçа кĕртме тăкакланă.

Çулталăк пуçланнă тĕле республикăри 5 пин пĕчĕк тата вăтам предприятипе уйрăм пайтаçă банкăн клиенчĕ шутланнă. Унăн пысăк пайĕ АПК тытăмĕнче, строительствăра, суту-илӳре, тирпейлекен промышленноçра вăй хурать.

Раççей ялхуçалăх банкĕн Чăваш Енри филиалĕн директорĕн çумĕ Константин Киргизов каланă тăрăх – банк пĕчĕк тата вăтам бизнеса кредитпа укçа-тенкĕ енчен пулăшассине сарсах пырать. Ку енĕпе Чăваш Ен малта пыракан регионсен йышĕнче. Малашне те ĕçе лайăхлатса пыма палăртаççĕ.

*РФ Тĕп банкĕн 3349-мĕш номерлĕ генеральнăй лицензийĕ.*

## *Суйлăр, çырăнăр, вулăр!*

**Февраль уйăхĕн 26-мĕшĕнчен тытăнса мартăн 7-мĕшĕччен**

**«Хыпар» Издательство çурчĕн хаçат-журналне 2015 çулăн иккĕмĕш çурринче илсе тăмашкăн йӳнĕ хакпа çырăнтараççĕ.**

***Васкăр, юратнă кăларăмсене йӳнĕлле çырăнса юлăр!***

| Кăларăмсем | Индекс | Февралĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 7-мĕшĕччен | Мартăн 8-мĕшĕнчен | Перекет |
|---|---|---|---|---|
| Хыпар | Д4800 | 649,50 | 737,70 | 88,20 |
| Эрнекун Хыпар | Д8353 | 280,74 | 321,96 | 41,22 |
| Самраксен хаçачĕ | Д4804 | 323,94 | 375,96 | 52,02 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | Д1515 | 292,26 | 340,44 | 48,18 |
| Сывлăх | Д1524 | 185,76 | 215,4 | 29,64 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | Д4806 | 165,30 | 192,66 | 27,36 |
| Хресчен сасси. Голос крестьянина | Д4838 | 241,38 | 280,92 | 39,54 |
| Тăван Атăл | Д1529 | 267,36 | 319,08 | 51,72 |
| Капкăн | Д4608 | 134,58 | 161,52 | 26,94 |
| Лик | Д3429 | 116,32 | 140,36 | 24,04 |
| Вести Чувашии | Д4807 | 265,38 | 310,92 | 45,54 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | Д4847 | 612,24 | 743,58 | 131,34 |
| Тантăш | Д4802 | 222,18 | 256,92 | 34,74 |
| Самант | Д3208 | 150,90 | 181,02 | 30,12 |
| Тетте | Д3771 | 120,18 | 143,52 | 23,34 |


## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунтикун, мартăн 2-мĕшĕ**

7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 6.30-7.00, 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Символ веры. (12+) 16.30-17.00 ЧНК калаçать. (12+) 17.30-18.00 Вăрман кĕвви. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунтикун-эрнекун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытларикун, мартăн 3-мĕшĕ**

